Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

40 (7894) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи май (çу) уйăхĕн 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

# Ĕç никĕсĕнче – пахалăх

Çур аки – 2011

***Район администрацийĕн ял хуçалăх пайне тăратнă оперативлă кăтартусемпе килĕшӳллĕн ĕнерхи куна пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çуртрисем акас ĕçе вĕçленĕ ĕнтĕ. Çавăн пекех пĕр çул ӳсекен курăксене çурхи ака-суха ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕн çителĕклех акса хăварма пултарнă. Çуртрисем акассине маларах вĕçленисем çамрăк калча çинчи çум курăкĕпе тата чир-чĕрпе химилле майпа кĕрешес ĕçе те кӳлĕннĕ. Çапла вара çаврăнăçуллăраххисем ку ĕçе 790 гектар çинче пурнăçланă та. Кунпа пĕрлех хуçалăхсем паян пахча çимĕç, çĕр улми лартаççĕ, кукуруза акаççĕ.***





... «Ударник» хуçалăха ĕçсем самай вăй илнĕ вăхăтра çитрĕмĕр. Эпир пулнă кун Вăрманкассисемпе Матьăксем тата çĕр улми вăрлăхĕ туса илекен лабораториĕçченĕсем тупăшсах «иккĕмĕш çăкăр» лартатчĕç. Акă Вăрманкассисен ĕç отрячĕн ăнăçăвĕпе паллашатăп.

– Ĕç условийĕсем тивĕçтереççĕ те алă усса ларас килмест. Уяр кунăн кашни сехечĕ шутра. Хамăр пурнăçа çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнăран çурхи кунăн пĕлтерĕшне те аван ăнланатпăр, – терĕ МТЗ-80 трактора чарса Изосим Николаевич Васильев механизатор. Çур акинчи унăн тĕп ĕçĕсенчен пĕри – çĕр улми лартма касăсем касса хурасси. Кунта вара питех те вăр-вар пулас пулать. Мĕншĕн тесен 6-шаррет «иккĕмĕш çăкăр» лартакан агрегатсемпе ĕçлекен Николай Ивановпа Радик Афанасьевăн тата Николай Семеновпа Геннадий Германовăн МТЗ-82 тракторĕсем ăна «таптасах» пыраççĕ.

Хуçалăхăн тĕп агрономĕ Александр Васильев та кунтах.

– Пурнăçланă ĕçĕн пахалăхĕ пулмасан вăй хума юрать-и? Паллах çук. Çакна пирĕн кашни ĕçчен ăнланать. Хамăрăн çур аки никĕсĕнче кăçал та ытти чухнехи пекех ĕç пахалăхне мала тăратрăмăр. Хальлĕхе пысăк кăлтăксемех çук. Çакă пулас тухăçра палăрасса шанатпăр, – терĕ Александр Юрьевич.

Агроном сăмахĕнчен кăçал хуçалăх çĕр улми валли 200 гектар (районта чи пысăкки) çĕр уйăрни паллă пулчĕ. 695 гектар çуртрисем, 400 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем акса хăварнă Йӳçкассисем иртнĕ кунсенче 150 гектара яхăн çĕр улми те лартса хăварчĕç. «Иккĕмĕш çăкăр» вăрлăхĕ туса илессипе палăрса тăраканскерсем массăллă лаптăксене «жуковский ранний», «удача», «невский», «любава», «снегирь», «бриз», «елизавета», «луговской», «скарб», «петербургский» лартрĕç тата лартаççĕ те. Кунти вăрлăх йăлтах супер-супер элита тата супер элита пахалăхли. Çакă вăл кĕркунне элита тата супер элита пахалăхлă çĕр улми вăрлăхĕ туянас текенсене шухăшлаттармаллах.

– Пирĕнпе ĕçлес текенсене эпир никама та каялла çаварса яман. Пирĕнтен туяннă вăрлăхшăн патшалăх субсиди пани те малашлăха пăхса ĕçлекен çĕр ĕçченĕшĕн пысăк тĕкĕ, – терĕ хуçалăх директорĕ Платон Павлович Давыдов ака агрегачĕсем 60 гектар кукуруза акма ĕлкĕрнине палăртса. Вăл кăçал 200 гектар ытла лаптăк йышăнмалла.

***... Районта кăçал 1253 гектар çĕр улми лартса хăварма пăхнă, тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем ĕнерхи кун тĕлне ăна 1020 гектар лартса хăварма ĕлкĕрнĕ. Районĕпе 300 гектар кукуруза акнă, 89 гектар пахча çимĕç лартнă.***

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: И.Н. Васильев ĕç хăвăртлăхне чакармасть; çĕр улми лартакан Г. Германов, Н. Иванов, Н. Семенов, Р. Афанасьев механизаторсем.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Ачалăх хыçа юлчĕ, умра – пурнăçăн анлă çулĕ

***Майăн 25-мĕшĕнче районти 243 ачашăн юлашки шăнкăрав янăрарĕ. 390 вĕренекен 9 класс пĕтерчĕ. Муркаш шкулне пĕтерекенсем вара кăçал 36-ăн. Вĕсене, ашшĕ-амăшĕсене, учительсене, 9 класра вĕренекенсене юлашки шăнкăравпа саламланă май Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул директорĕ В.В. Ялушкин çапла каларĕ:***

– Кăçал шкултан вĕренсе тухакансем хăйсем хыççăн уйрăмах ырă йĕр хăвараççĕ. Вĕсем вĕренӳре те, спортра та, обществăлла пурнăçра та çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ турĕç, – терĕ.

Владислав Валентинович 11-мĕшсемпе 9-мĕшсене экзаменсенче ăнăçу, шкултан вĕренсе тухакансене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма ырлăх-сывлăх сунчĕ. Унтан 11-мĕшсене пĕрлехи патшалăх экзаменĕ тытма тата 9-мĕшсене пĕтĕмĕшле патшалăх аттестацине хутшăнма ирĕк панине çирĕплетекен приказпа паллаштарчĕ. 11-мĕшсем пурте экзамен тытаççĕ. 9-мĕшсем вара 63-ĕн тĕрĕслевре хăйсен пĕлĕвне кăтартма хатĕр.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ачасене çак паллă кунпа саламланă май вĕрентӳ сфери питĕ пĕлтерĕшлĕ отрасль пулнине палăртрĕ. Мĕншĕн тесен паянхи кун та, ыранхи кун та, пĕтĕм пуласлăх çак отрасль епле аталаннинчен килет. Кăçал район бюджетĕнчи 345 млн. тенкĕ укçаран 205 млн. тенкине çак отрасле валли уйăрнă.

– Паян шкултан вĕренсе тухакансем пирĕн çĕр-шыври пултаруллă та маттур çынсен йышне кĕреççĕ. Умри тĕллевĕрсене çине тăрсах пурнăçлăр, – терĕ Юрий Александрович.

Юрий Александрович отличниксене район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине, çавăн пекех – Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин тата Физкультурăпа спорт, туризм министерствисен Хисеп грамотисене пачĕ.

Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин вара 11-мĕшсене хăйсем хыççăн ырă ят хăварма Муркаша илем кĕртнĕ çĕре тепĕр хут хутшăнма сĕнчĕ. 9-мĕшсене Çĕнтерӳ паркне тирпейлем кĕртнĕшĕн тав турĕ.

Юлашки шăнкăрав уявĕ Муркаш шкулĕнче яланхи пекех питĕ интереслĕ сценарипе иртрĕ. 11-мĕшсем ачалăхпа, юмах тĕнчипе сыв пуллашрĕç. Вĕсен пĕрремĕш вĕрентекенĕсен ячĕпе З.И. Львова саламларĕ. Учительсене хăйсем вулама-çырма вĕрентнĕ ачасенчен пултаруллă та маттур çамрăксем тунăшăн тав турĕ.

Вунпĕрмĕшсен класс ертӳçисем Л.Ю. Красновăпа Г.Н. Тимофеева та питĕ пăлханаççĕ.

– Чи маттур ачасене ăсататпăр паян ачалăх тĕнчинчен пурнăçăн анлă çулĕ çине. Халĕ ĕнтĕ сирĕн пирĕнсĕрех, учительсемсĕрех, тӳрлетме тивет хăвăрăн йăнăшăрсене. Йывăрлăхсене пĕр шиксĕр çĕнтерсе малалла çирĕппĕн утăр, – терĕ Л.Ю. Краснова.

Ашшĕ-амăшĕсен ячĕпе Л.Г. Федорова шкул администрацине вĕренме условисем туса панăшăн, учительсене кашни ачара пултарулăхне тупса малалла аталантарнăшăн тав турĕ.

Шкул ачисем те кашни выпускник ячĕпе сăвă йĕркипе ырă сăмахсем каларĕç. Вĕсем 11-мĕшсене, лешсем кусене асăнмалăх парнесем пачĕç. Сывлăша шарсем çĕкленчĕç. 11-мĕшсен ĕмĕчĕсем те çӳле-çӳле çĕкленсе пĕрин хыççăн тепри пурнăçа кĕччĕр.

Çак кун юлашки шăнкăрав кашни шкулта янăрарĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Чуманкасси, Йӳçкасси шкулĕсенче, Муркаш лицейĕнче пулса выпускниксене саламларĕ. Йӳçкассинче вара хаваслă линейка хыççăн виçĕ ăрури выпускниксен тĕл пулăвĕ питĕ интереслĕ иртрĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

ЧР Президент администрацийĕнче

## Июнĕн 30-мĕшĕччен йышăнаççĕ

Саккунсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссине йĕркелес ĕç пуçăннă. Кандидатурăсем пирки сĕнӳсене ЧР Президенчĕн ячĕпе ямалла.

Субъектсем Чăваш Республикин Тĕп суйлав комссийĕн йышне хăйсен кандидачĕсене сĕнни пирки тунă йышăнусемпе пĕрле кандидатăн биографилле характеристики (хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ, хăçан çурални, ăçта пурăнни, ăçта ĕçлени, должноç е мĕн ĕçĕпе пурăнни), Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулни, хăйне ЧР Тĕп суйлав комиссийĕн членне çирĕплетме кандидат ирĕк пани пирки çырнă заявлени кирлĕ. Политика партийĕ, обществăлла пĕрлешӳ кунпа пĕрлех хăйĕн уставĕн тата патшалăх органĕнче регистрациленин свидетельствин копийĕсене тăратма тивĕç.

Кандидатурăсем пирки материалсене 2011 çулхи июнĕн 30-мĕшĕччен çак адреспа йышăнаççĕ: 428004, Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10-мĕш çурт, Чăваш Республикин Президент администрацийĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 39-32-14, 39-35-69; 4-мĕш тата 5-мĕш кабинетсем (11-мĕш хут).

Йышăну

## Нумай ачаллă çемьесене çĕр – тӳлевсĕр

Район администрацийĕн пуçлăхĕ апрелĕн 18-мĕшĕнче 352 № йышăнăва алă пуснă. Вăл нумай ачаллă çемьесене çĕр участокĕсем тӳлевсĕр майпа уйăрса парассипе çыхăннă. Унпа килĕшӳллĕн Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчи çĕр участокĕсене нумай ачаллă çемьесене харпăрлăха тӳлевсĕр майпа çакăн чухлĕ таран уйăрса пама пултараççĕ:

– харпăр хăйĕн пурăнмалли çуртне тума – 0,12 гектар;
– дача строительстви валли – 0,10 гектар;
– харпăр хăйĕн хушма хуçалăхĕ валли – 0,20 гектар.

Муркаш ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă çĕр участокĕсене çак виçерен ытла мар уйăраççĕ:

– харпăр хăйĕн пурăнмалли çуртне тума – 0,06 гектар;
– дача строительстви валли – 0,06 гектар;
– харпăр хăйĕн хушма хуçалăхĕ валли – 0,12 гектар.

«Чăваш Енри çулталăк воспитателĕ – 2011»

## Конкурс лауреачĕ – Муркашран

«Чăваш Енри çулталăк воспитателĕ» конкурс кăçалхипе республикăра иккĕмĕш хут тата малтанхинчен анлăрах иртрĕ. Унта Муркашри «Солнышко» ача садĕнче вăй хуракан Оксана Валерьевна Прокопьева та хутшăнма тивĕç пулчĕ.

Конкурсăн пĕрремĕш тапхăрне 27 воспитатель хутшăннă. Пĕтĕмлетӳ хыççăн чи ăста пилĕк воспитатель финала тухнă. Вĕсен шутĕнче – О. Прокопьева та.

Иккĕмĕш тапхăрти кăтартусемпе Оксана Валерьевна конкурс лауреачĕн ятне илме тивĕç пулнă. «Чăваш Енри çулталăк воспитателĕ – 2011» ята Çĕнĕ Шупашкарти 37 № «Ласточка» ача садĕн воспитателĕ Т. Милютина çĕнсе илнĕ.

**Хамăр инф.**

Шкул лесничествисен слечĕ

## Юнкăсен шкул лесничестви – республикăра чи лайăххи

Кăçалхипе республикăри шкул лесничествисен слечĕ 25-мĕш хут иртрĕ. Унта пирĕн район чысне Юнкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул команди хӳтĕлерĕ.

Ачасене биологипе хими учителĕ Т.В. Ермакова ертсе пырать. Унăн ăсталăхĕпе пултарулăхĕ вĕренекенсемшĕн яланах тĕслĕх. Çавăнпах вĕсен хавхаланăвĕ те пысăк.

Тăрăшуллă пулнăран ĕнтĕ вăрманçăсен конкурсĕнче А. Ермаковпа А. Федоров пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсем çĕнсе илчĕç. М. Сытина ӳсен-тăран çинчен нумай пĕлнине кунта та çирĕплетсе пачĕ. Ботаниксен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕ пулчĕ. Чĕр чунсен тĕнчине лайăх пĕлнипе Е. Федорова иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Е. Шишкина пулăсем çинчен пĕлнĕ чухлĕ слетра урăх никам та пĕлеймерĕ.

Слет тата ытти тĕрлĕ конкурссемпе те пуян пулчĕ. Тăватă кунхи кăтартусемпе Муркаш районĕн команди çĕнтерӳçĕ пулнине палăртрĕç.

**С. ЕГОРОВА,**
**ачасен пултарулăхĕн районти çурчĕн методисчĕ.**

Саламлатпăр!



Çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче пирĕн юратнăран та юратнă, çепĕç те кăмăллă аннен, кукамайăн, асаннен – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Агния Романовна ЛЮБИМОВĂН** çуралнă кунĕ. Эпир ăна 85 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе, çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр, телей, çирĕп сывлăх сунатпăр. Турри сана татах та вăрăм кун-çул пиллетĕр. Эс пурри – пирĕн савăнăç. Нумай çул хушши пире савăнтарса пурăнмалла пултăр санăн. Тавах сана пуриншĕн те, юратнăшăн, ятланăшăн, çын тунăшăн.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 23 мăнукĕ, 28 прамăнукĕ, çывăх тăванĕсем, тăхлачисем.**



## Уявсене савăнăçлă ирттеретпĕр

Эпир, ватă çынсен Мăн Сĕнтĕрти вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмĕнче пурăнакансем, пирĕн пата юрă-ташăпа хăнана килекенсене пысăк тав сăмахĕ каласшăн. Уйрăмах Катькасри пуçламăш класра вĕренекенсене, вĕсене вĕрентекенĕсене, ача сачĕн ертӳçине Л.П. Сергеевăна, унта ĕçлекенсене Н.М. Кондукторовăна, Н.В. Никольскаяна тата А.В. Сальниковăна.

Мăн кун эрнинче вĕсем пире çав тери савăнтарса хăварчĕç. Артистсенчен пĕрре те кая мар. «Чăпар чăх» сценки мĕне тăрать! Чăваш тумĕ тăхăннă карчăкпа старик ватă çынсене ĕлĕкхине аса илтерчĕç, савăнăç куççулĕ кăларчĕç. Чăпар чăххи вара кашнинех Мăн кун çăмарти парнелерĕ. Ачасен юрри-ташши ваттисен кăмăлне çĕклерĕ.

Çавăн пекех май уявĕ ячĕпе Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи 6-мĕш класра вĕренекенсем класс ертӳçипе Г.В. Кирилловăпа килсе саламларĕç, юрларĕç, ташларĕç.

Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе вара Мăн Сĕнтĕрти ача садне çӳрекенсем О.М. Иванова музыка ертӳçипе килсе савăнтарчĕç.

Вĕсене пурне те ватă çынсене манманшăн, пурăнма хавхалантарнăшăн тайма пуç. Ырри кăна пултăр вĕсен пурнăçра. Пирĕн çурт алăкĕ çакăн пек ырă çынсемшĕн яланах уçă.

**Ваттисем ыйтнипе Л. КАРГИНА, уйрăм ертӳçи.**

# Манăн асаттен те тӳпи пур

**Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа – 66 çул**

***Акă ĕнтĕ кăçал Аслă Çĕнтерӳ кунне 66-мĕш хут уявларăмăр. Вăрçăра вилнисем, кайран çĕре кĕнисем, халĕ пурăнаканнисем, тылра ырми-канми ĕçлесе çĕнтерĕве çывхартнисем яланах пирĕн асра.***

Манăн та хамăн кукаçи пирки каласа парас кăмăл пур. Аслă Çĕнтерĕве çывхартассинче унăн та тӳпи пур тесе шутлатăп.

Асаттем, Валериан Степанович Волков, 1924 çулта çуралнăскер, вăрçă пуçланнă чухне 17-ре кăна пулнă-ха. Вăрçа вăл 1942 çулхи çĕртме уйăхĕнче илсе кайнă. Малтанах артиллерист пулса «Катюша» расчетĕнче çапăçнă. Калуга облаçĕнчи Козельск, Сухиничи, Ельня хулисем патĕнчи хаяр çапăçусене хутшăннă. Ытти салтаксемпе пĕрле Смоленск облаçĕнчи Орша, Поинок, Дорогобух хулисене нимĕç фашисчĕсенчен хăтараççĕ.

Кайран унăн Орловск – Курск пĕкки патĕнчи çар операцийĕсене те хутшăнма тивет. Кунта хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăлаççĕ. Малалла Белоруссси хулисене пĕрин хыççăн теприне ирĕке кăлараççĕ.

1943 çулта асатте аманать, госпитале лекет. Хыççăн вара сывалса тухсан каллех çапăçусене хутшăнма тытăнать. Литва, Польша çĕрĕсене нимĕç эшкерĕнчен тасатаççĕ. Çĕнтерӳ кунне Кенигсберг хулинче кĕтсе илет. Ку вăхăта тепĕр хут Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, икĕ хутчен «За отвагу», «За взятие Кенигсберга» медальсене тивĕçет.

Анчах та уншăн вăрçă çакăнпах вĕçленмест. Ытти салтаксемпе пĕрле ăна Инçет Хĕвел тухăçнелле япунсемпе çапăçма илсе каяççĕ. Кукаçи çаппа каласа пани асра:

– Вăрçă вĕçленни пирки пĕлсен питĕ савăнтăмăр. Пире яппунсемпе çапăçма илсе каясси пирки нимĕн те пĕлтермен. Пуйăс çине ларса киле каятпăр тесе шутланă. Анчах та тăван вырăнсем патне çитсе иртсе те кайрăмăр, çапах та чарăнма приказ пулмарĕ. Кайран тин пĕлтĕмĕр пирĕн çул ăçталла пулнине, – тетчĕ вăл. Кунта та «За победу над Японией» медальпе наградăлаççĕ ăна.

Кукаçи вăрçă хыççăн малтанах счетоводра, кайран нумай çул хушши «Передовик» хуçалăхра председательте тăрăшнă. Каярахпа вара ĕçлеме Мăн Сĕнтĕрти хатĕрлев кантурне куçать.

Мăшăрĕпе Валентина Васильевнăпа икĕ ывăлпа хĕр пăхса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Шел пулин те 1992 çулта вăл пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.



**Т. ЕФИМОВА, Мăн Сĕнтĕр библиотекин методисчĕ.**

**Официально**

**Чувашская Республика Моргаушское районное Собрание депутатов**
**РЕШЕНИЕ**

**26.05.2011г.** **№ С-7/1**
село Моргауши

**О внесении дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 25.10.2007г. №С-21/6 «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»**

В соответствии с Налоговым кодексом Российской Федерации и Федеральным законом от 07 марта 2011 г. № 25 - ФЗ «О внесении изменения в статью 346.29 части второй Налогового кодекса Российской Федерации» в целях регулирования налоговых правоотношений Моргаушское районное Собрание депутатов решило:

Статья 1. Внести в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 25.10.2007г. №С-21/6 «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления» (далее – Решение) следующие дополнения:

1) в приложении № 2 к Решению в позиции 2 после слов «Розничная торговля, осуществляемая в объектах стационарной торговой сети, а также в объектах нестационарной торговой сети площадь торгового места в которых не превышает 5 квадратных метров» дополнить словами «за исключением реализации товаров с использованием торговых автоматов»;

2) в приложении № 2 к Решению после позиции 2 дополнить позицией следующего содержания:

| Виды предпринимательской деятельности | Коэффициент К2 для населенных пунктов численностью (чел.) | | | |
|---|---|---|---|---|
| | До 200 | От 200 до 2000 | Свыше 2000 | На придорожных полосах автомобильной дороги М-7 «Волга», проходящий по территории Моргаушского района |
| Реализация товаров с использованием торговых автоматов | 0,6 | 0,7 | 0,8 | 0,8 |

Статья 2. Настоящие решение вступает в силу не ранее чем по истечении одного месяца со дня его официального опубликования и не ранее 1-го числа очередного налогового периода по единому налогу на вмененный доход для отдельных видов деятельности.

**Глава Моргаушского района И.В. НИКОЛАЕВ.**

# ШАНЧĂКЛĂХ СТРАТЕГИЙĔ

**«Промагрофонд» НПФăн 2010 çулхи ĕç итогĕсем**

Раççей çыннисен патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем (НПФ) патне интерес çултан-çул ӳссе пырать. Халĕ çĕршывăн пенси рынокĕнче 100 ытла НПФ ĕçлет. Хăвăн фондна мĕнле суйласа илмелле? Специалистсем çапла канаш параççĕ: чи малтанах фондăн ĕç стажĕ, унăн тупăшлăхĕ, клиентсен йышĕ çине тимлĕх уйăрмалла. Питех те кирлĕ кăтарту – фонд пурлăхĕ: вăл мĕн чухлĕ нумайрах, клиент умĕнчи тивĕçсене пурнăçлассин гарантийĕсем те çавăн чухлĕ пысăкрах.

Халĕ вара темиçе цифра. «Промагрофонд» НПФ Совечĕн март вĕçĕнче иртнĕ ларăвĕнче 2010 çулхи ĕç итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Итогĕсем самаях сулăмлă. НПФăн пурлăхĕ 2,8 хут ӳснĕ тата паянхи куна 11 миллиард ытла тенкĕпе танлашать. Устав ĕçхĕлне тивĕçтермелли пурлăх 55 процент ӳснĕ тата 2,5 миллиард ытларах тенкĕпе танлашать. Пухăнса пыракан пенси укçин калăпăшĕ 2,4 хут ӳснĕ, 8,7 миллиард тенке çитнĕ. Фонд шанчăклăхĕ сулăмлă результат парать: 2010 çул итогĕсемпе «Промагрофонд» НПФ Совечĕ клиентсен счечĕсем çине çулталăкне 10 процентпа инвестици тупăшĕ куçарса пама йышăннă. Тĕслĕхрен, енчен те сирĕн лицевой счет çине 10 000 тенкĕ хывнă пулсан, куçарса панă тупăша шута илсе вăл 1000 тенкĕ хушăннă. Паян мĕнле банк çакăн пек процентсем сĕнме пултарать-ха?

Ĕçĕн тата тепĕр питĕ пĕлтерĕшлĕ кăтартăвĕ – клиент бази сарăлса пыни. «Страхланă çынсен хисепĕпе 2010 çулта Фонд Раççейри НПФсен пĕрремĕш пилĕк йышне кĕнĕ, – палăртать «Промагрофонд» НПФăн ĕç пурнăçлакан директорĕ Ольга Буланцева. – 2010 çулта пирĕн фонда 315 000 çын суйласа илнĕ. Çакă халăхăн пенси тĕлĕшĕнчи пĕлĕвне ӳстерессипе, шанчăклăхпа тупăшлăха пĕрлештерессипе çыхăннă пирĕн стратеги хăйне тӳрре кăларнине çирĕплетет.



«Промагрофонд» НПФ хăйĕн уйрăмĕсен сетьне тĕтăшах анлăлатса пырать. Фонд Раççейри 113 хулара ĕçлет, 2011 çулта çĕнĕ офиссем уçăлĕç, мĕншĕн тесен ку сен экономикине инвестицилени. Инвестицисене регионсен влаçĕсемпе калаçса татăлнă тăрăх хывнă укçа чăннипех тупăш кӳтĕр тесе хываççĕ.

Чăваш Енре «Промагрофонд» НПФа 2008 çулта уçнă. Иртнĕ çул республикăра унăн çĕнĕ клиенчĕсем 7 пин çын пулса тăнă, ПФОра вара (пирĕн филиал Фондăн Вăтам Атăлти дирекцийĕ те шутланать) – 48 пин. «Ку пирĕн сотрудникĕсен професси шайĕ ӳснин кăтартăвĕ те, çынсен хăйсен пуласлăхĕ пирки пĕлсе тăрăшма тытăнни те, – тет филиал директорĕ Ирина Косякова. – Пулас пенсие ӳстерессин майĕсем патне тăтăшах интерес ӳсет: ку вăл хушма пенсисемпе тивĕçтерессин программисем патне те, чи малтанах, пенсисен софинансированийĕн патшалăх программи патне».

– Пĕрремĕш взнос тӳлени самантран тытăнса (программăна вара 2013 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнчен кая юлмасăр кĕмелле) çын софинансировани программине 10 çул хушши хутшăнать, – пирĕн клиентсемшĕн меллĕ. Кунсăр пуçне «Промагрофонд» НПФра çакăн пек йăла-йĕрке пулса кайнă: страхланă çынсен пухăнса пыракан пенси укçин пĕр пайне фонд хăй ĕçлекен регион-

**2010 çулта «Эксперт РА» рейтинг агентстви «Промагрофонд» НПФа питĕ пысăк шанчăклăх шайĕ панă – «АÇ». Рейтинг хакĕн шайĕ çине витĕм кӳрекен ырă факторсен йышне агентство аналитикĕсем пухăнса пыракан пенси укçине инвестицилессин пайĕнчи шайлашуллă консервативлă инвестици стратегине, страховани резервĕн тата пенси тивĕçĕсене хуплассин резервĕн пысăк шайлашулăхне кĕртнĕ.**

**ПИРĔН СПРАВКА**

**«Промагрофонд» НПФ Раççей пенси системинче 16 çул ытла ăнăçлă ĕçлет. Фонд обязательнăй пенси страхованийĕпе тата патшалăхăн шутланман пенси тивĕçтерĕвĕпе услугăсем туллин парать.**

**«Промагрофонд» НПФ – НПФсен Наци Ассоциацийĕн членĕ, «Раççейри машинăсем тăвакансен союзĕн» членĕ, космос ĕçĕ-хĕлĕн тата Раççейри ДОСААФ участникĕсен пĕтĕм тĕнчери Ассоциацийĕн пенси программисен партнерĕ.**

тăсать малалла Ирина Николаевна. – Ку вăл пысăк сроклăх тата тупăшлă проект. Калаçу, чăннипе илсен, çулталăкри 100 процентлă тупăшлăх пирки пырать, ăна урăх нимĕнле финанс инструменчĕ те памасть. Инвестицилениене шута илсен вара тупăшлăх пысăкрах та.

Калăпăр, 2009 çулта сирĕн взнос софинансированипе 2 пин тенкĕпе танлашнă. Патшалăх та çакăн пек сумма хушса панă – çапла вара сирĕн пенси счечĕ çинче 4 пин тенкĕ пухăннă. Енчен те эсир пухăнса пыракан пенси укçине «Промагрофонд» НПФа куçарса панă пулсан çулталăк хушшинче çак сумма тата тепĕр 10 процент – 400 тенкĕ ӳснĕ.

Юлашкинчен тата, укçан пĕр пайĕ сирĕн пата пуласлăхра мар, паянах таврăнать. Пенсисен софинансированийĕн программипе тӳленĕ взноссен сумминчен эсир социаллă налук вычетне 13 процент илетĕр. Урăхла каласан, тӳленĕ 2 пин тенкĕрен сирĕн пата 260 тенкĕ каялла таврăнать. Кун йышши налук çăмăллăхĕсем патшалăхăн шутланман пенси тивĕçтерĕвĕн договорĕпе хушма пенси программисем тăрăх тӳлекен взноссем тĕлĕшĕпе те ĕçлеççĕ.

Софинансировани программине кĕмешкĕн заявлени пама Раççей Пенси фончĕн хăвăр пурăнакан вырăнти управленине те, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсене те, вăл шутра «Промагрофонд» НПФа та, юрать, вăл 2011 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче Раççей Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри уйрăмĕпе алă пуснисене çирĕплетсе парасси çинчен пĕр-пĕринпе килĕшӳ тунă.

«Промагрофонд» НПФ филиалĕнче (вăл çак адреспа вырнаçнă: Шупашкар хули, Ярославская урам, 29-мĕш çурт, 109-мĕш офис) халăха валли тăтăшах тӳлевсĕр консультацисем ирттереççĕ.

«Промагрофонд» специалисчĕсем Муркаш районĕнчи предприятисемпе организацисем чĕннипе те, хăйсене тĕллĕн те халăх патне тухса çӳреççĕ.

Çыхăнмалли телефонсем – (8352) 62-20-30, 62-17-54.

# Кил тата хушма хуçалăх



## Тухăç çилĕ çумăр кӳмест

Çил каç енне вăйланать – çанталăк пăсăлласса.
Вăрман çийĕн тӳпе кăвакарать – çумăр пулать.
Ула курак шыва кĕрет – çанталăк çумăра каять.
Хĕвел тухăç çилĕ нихăçан та çумăр илсе килмест.
Чанасем ушкăнпа вĕçеççĕ пулсан – çумăра.

## Анăçпа тухăç алă параççĕ

**Пахчаçăн уйăх календарĕ**

**САДРА**

Çĕртме уйăхĕнче хăмла çырли, палан, шăлан (шиповник) чечеке ларма пуçлаççĕ. Уйăх вĕçленнĕ тĕле çĕр çырли пиçсе çитет. Çак уйăхра опытлă пахчаçă улмаçырла йывăççисем патĕнчи çĕре пусса кăпкалатать, çумран иртет. Йывăççене тăтăш шăвармалла, апатлантармалла, сăтăрçăсемпе кĕрешме пуçламалла.

**Çĕртме уйăхĕн 1–3-мĕшĕсем**. Çĕнĕ уйăх. Нимĕн лартма та, куçарса лартма та сĕнӳ çук. Йывăççемпе тĕмсене сăтăрçăсенчен пĕрĕхме юрать.

**Çĕртме уйăхĕн 3–5-мĕшĕсем**. Ӳсен-тăрана шăвармалла тата минераллă удобренисемпе апатлантармалла. Йывăççемпе тĕмсене апатлантарнă çĕрте азотлă удобренипе ытларах усă курни аван.

**Çĕртме уйăхĕн 5–7-мĕшĕсем**. Йывăççемпе тĕмсене сăтăрçăсенчен тата чир-чĕртен хӳтĕлесе тĕрлĕ имçампа пĕрĕхмелле.

**Çĕртме уйăхĕн 7–10-мĕшĕсем**. Удобренисем хывма юрамасть. Çамрăк хунавсем лайăх чĕрĕлеççĕ. Улмаçырла йывăççисем таврашĕнчи çĕре кăпкалатма, купалантарма, çумлама, шăварма меллĕ вăхăт.

**Çĕртме уйăхĕн 10–12-мĕшĕсем.** Йывăççене сыпма юрать. Вĕсем таврашĕнчи çĕре кăпкалатма, çумран тасатма, шăварма меллĕ вăхăт.

**ПАХЧАРА**

Уйăх варринче çĕр улмине купалаççĕ. Явăнса ӳсекен ӳсен-тăран айне тĕревсем вырнаçтараççĕ. Хăяр калчине сайратни юрăхлă, анчах йăрансене кăпкалатма тăхтăр, мĕншĕн тесен хăяр тымаррисем çиелте вырнаçнăран суранланма пултараççĕ.

Чечек йăранĕсене шăварса, çумран тасатса, кăпкалатса тăмалла. Вĕсене апатлантарни те ытлашши пулмасть. Чечек йăранĕсене ирпе шăварни вырăнлăрах, мĕншĕн тесен кăнтăрла шăварсан çулçăсем аманма, пиçсе кайма пултараççĕ.

Çĕртме уйăхĕ раштав епле пуласси пирки калать.

**Çĕртме уйăхĕн 1–3-мĕшĕсем.** Çĕнĕ уйăх. Нимĕн лартма та, куçарса лартма та сĕнместпĕр. Йывăççемпе тĕмсене чир-чĕртен, сăтăрçăсенчен пĕрĕхме юрать. Хуçалăх ĕçĕсене пурнăçлăр, йăрансем тăвăр, нӳрĕк тытăр.

**Çĕртме уйăхĕн 3–5-мĕшĕсем.** Ӳсен-тăрана минераллă удобрени шывĕпе шăварнин усси пулать. Салата, укропа кĕркунне апатра усă курма иккĕмĕш хут акма та юрать. Йăран çине пĕр çул ӳсекен чечексене куçарса лартма меллĕ вăхăт.

**Çĕртме уйăхĕн 5–7-мĕшĕсем.** Пахча çимĕçе шăварма тата тымарсем патне апатлантарма юрăхсăр вăхăт. Йăрансене чир-чĕртен, сăтăрçăсенчен пĕрĕхме юрать. Шăрăха чăтăмлă ӳсен-тăран акма-лартма юрать. Ку вăхăтра пухнă эмел курăкĕсен «вăйĕ» ытларах.

**Çĕртме уйăхĕн 7–10-мĕшĕсем**. Удобренисем хывма юрамасть. Çамрăк хунавсем лайăх чĕрĕлеççĕ. Икĕ çул ӳсекен чечексене акма меллĕ кун. Эмел курăкĕсене акма-лартма тата куçарса лартма юрать. Балконри тата пӳлĕмри чечексене куçарса лартма та пултаратăр.

**Çĕртме уйăхĕн 10–12-мĕшĕсем**. Укроппа салата иккĕмĕш хут акма лайăх вăхăт. Нумай çул ӳсекен сухан акма вырăнлă. Йăран çине пĕр çул ӳсекен чечексене куçарса лартма меллĕ вăхăт. Пӳлĕмри чечексемпе эмел курăкĕсене лартни тата куçарса лартни вырăнлă пулать.

**(Малалли пулать).**

**01 асăрхаттарать**

## Типĕ курăк

Пушар хăрушсăрлăх правилисене çын куççулĕпе çырнă тетпĕр пулсан та, пирĕн хушăмăрта çав правилăсене шута илменнисем çав-çавах тĕл пулаççĕ-ха. Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук.

Кăçалхи 19 пушартан пĕр пайĕ усă çулăмпа асăрханусăр пулнипе, теприсем электрооборудование эксплуатацилес правилăсене пăснипе, юсавсăр кăмакасемпе тата мăрьесемпе усă курнипе сăлтавланни курăнать. Юсавсăр кăмакана пула çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче пĕр сехетре Оринин ял тăрăхĕнчи «Энергетик» коллективлă садра 6х5 метр калăпăшлă дача çурчĕ çунса кайрĕ. Талăк малтан «Пищевик» коллективлă садра йывăç мунча кĕлленнин сăлтавĕ – кăмакана монтаж тунă чухнехи правилăсене пăсни.

Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче Катькас ял тăрăхĕнче типĕ курăк çунма пуçлани пушар хăрушлăх тапхăрĕ çывхарни çинчен систерет. Пушар машинисем вăхăтра çитнипе çеç çулăм сарăлаймарĕ.

**К. ПОПОВ,**
**районти пушар надзор ĕç-хĕл пайĕн инспекторĕ.**

**Хамăн опытпа паллаштаратăп**

## Килте хатĕрленĕ çĕпре

Ăшă шывпа çунă 100-200 г исĕм çырлине кĕленче банкăна ямалла, лĕп шыв хушмалла. Унта кăштах сахăр песукĕ хушмалла, кĕленче анине 4 хут хутлатнă марльăпа çыхса ăшă çĕре 4-5 куна лартмалла. Исĕм çырли йӳçме пуçласан çĕпре туса чустана хушмалла. Çакăн пек çĕпререн хатĕрленĕ чуста йӳçĕ мар, ырă шăршăллă пулать.

**В. ИВАНОВА.**

# Вĕсем ыранхи кунпа пурăнаççĕ

**Ял çынни тата строительство**



Йывăрлăхсене пăхмасăрах ял пурăнать-ха, çĕнĕ тĕллевсене пурнăçа кĕртет. Çамрăксем çемьесем чăмăртаса ачасем çуратаççĕ. Вĕсем хăйсен вăйĕпе пурăнмалли килсурт çавăрма тăрăшаççĕ. Ыранхи куна шанчăклăн пăхаççĕ. Ырă тĕллевсемпе мал туртăмлă улшăну ĕçĕсем, тĕпрен илсен, йăлтах хăйсенчен килнине Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмаш ялĕнче пурăнакан Алексей Геннадиевич Алексеевăн çемйи те хăйсен пурнăç тĕслĕхĕнчен ăнланса пырать.

5 ачаллă çемье. Çăмăл-и-ха вĕсене пурнăçри йывăрлăхсене çĕнсе пыма? Ку ыйту патне çитсен Алексейăн амăшĕ тата пĕчĕккисен асламăшĕ Лидия Вениаминовна Алексеева куççульне шăлса илсе пăшăлтатрĕ:

– 1972 çулта Çамрăксен урамĕнче çĕр илсе Гена мăшăрăмпа хамăра валли кил-çурт çавăрас çула суйласа илтĕмĕр. Хирте пӳрт-çурт лартнă хушăрах пĕр хĕрпе 2 ывăл çуратса ӳстертĕмĕр. Хамăр та ĕççĕр ларман, ачасене те пĕчĕккĕллех ĕçе хăнăхтартăмăр.

...Çуркунне вăй илнĕ вăхăт. Тӳпери çăлтăрсем те хĕллехи пек мар ĕнтĕ, самай ăшшăн пăхнăн туйăнать. Çулла çывхарать. Çамрăксен урамĕнче ирттен пуçласа каç пуличченех мăлатук шаккани илтĕнсе тăрать. Нимелле ĕçлеме пухăннă арçынсем пурăнмалли пӳртĕн çивиттине сӳтсе ун вырăнне кĕске хушăрах çăмăллатнă конструкциллĕ иккĕмĕш хут çĕклерĕç.

– Хамăрăн алă-ура ĕçленĕ чух ачасен пуласлăхĕ пирки те шутлас пулать. Килтен хăвараса кăларса ярайрас çук. Тăван килтех кашнин валли пӳлĕм пултăр тесе ĕçлетпĕр Ольга мăшăрăмпа. Тăвансене, ял çыннисене пулăшушăн пысăк тав, – терĕ алăри уровень çинчен куçне вĕçертмесĕр кил хуçи Алексей Алексеев **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** ĕç ăннишĕн савăнăçне пытармасăр.

Çапла пурăнать, малашлăха пăхса ача-пăча çуратса-ӳстерсе çурт-йĕр çавăрать ĕçрен нихăçан та пăрăнман ял çамрăкĕ.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**





# Хими им-çамĕсĕр те май пур

**Пахча çимĕç çитĕнтерекенсене пĕлме**

***Сиенлĕ пулăмсемпе кĕрешме хими препарачĕсем темĕн чухлех. Эпир кăштах ытти меслетсем çинчен каласа парасшăн. Хăяра сиенлекен сăвăса, купăста кĕвине, ӳсен-тăран сĕткенне ĕмекен ытти хурт-кăпшанкăна пĕтерме ыхран, сухан хуппин, çĕр улми аврин, лаша кĕпçин, кукша пуçăн, мулкач курăкĕн вĕретсе тăрăлтарнă шывĕпе те усă кураççĕ. Нумай пахчаçă ыхрана шӳтерсе тăрăлтарнă шывпа çĕр улмин фитофторипе кĕрешме усă курать.***

***Купăста лĕпĕшĕн çулçă кăшлакан хуртне, кĕвине пĕтерме ӳсен-тăрана помидор аврин, армутин, табакăн, хутаçлă йӳçĕ пăрăçăн вĕретсе тăрăлтарнă шывĕпе, салтак тӳми чечекĕн, хупахăн йӳçĕ шывĕпе усă кураççĕ. Купăстапа сухан шăнисене, пăрçасене пĕтермешкĕн табак тусанĕпе сапаççĕ, шĕпĕн курăкĕн порошокĕпе тусанлаççĕ.***

**Ыхра шывĕ.** 40–50 грамм ыхрана мясорубка витĕр кăлараççĕ. 10 литр шыва ярса лайăх пăтратаççĕ. Пĕр талăк лартнă хыççăн сăрăхтарса илеççĕ те çĕр улми чечеке ларма пуçласан, помидор чăмăртанма тытăнсан фитофтороза пĕтерес тĕллевпе сирпĕтеççĕ. Кашни 10 кун урлă 3–4 хут сирпĕтмелле.

**Суханпа сухан хуппин шывĕ.** 200–300 грамм сухана мясорубка витĕр кăлараççĕ, 10 литр шыва ярса 1–2 талăк лартаççĕ те сăрăхтарса илеççĕ. Çур витре сухан хуппине 60–70 градуслă вĕри шывра шӳтереççĕ, 1–2 талăк лартаççĕ. Сăрăхтарса илнĕ хыççăн çурри таран шыв хушмалла. Çак шĕвек ӳсен-тăрана сирпĕтме хатĕр те.

**Çĕр улми аврин шывĕ**. Чĕрĕ çĕр улми аври 1,2 килограмм е 600–800 грамм типĕтнĕ авăра 10 литр шыва яраççĕ те 3–4 сехет лартаççĕ.

**Кăшкар утипе хăлха çакки курăкĕн шывĕ.** Йӳçĕ шыв тума ӳсен-тăран тымарĕсемпе усă кураççĕ. 400 грамм çуса тасатнă тымарсене мясорубка витĕр кăлараççĕ те 10 литр шывра 2–3 сехет лартаççĕ.

**Хупах шывĕ.** Çур витререн сахалрах вĕтетнĕ хупах çулçисене витре туличчен шыв хушаççĕ те 3 талăк лартаççĕ.

**Помидор аврин шывĕ.** Помидор тĕммин касса пăрахнă ытлашши турачĕсене вĕттĕн тураççĕ, 400 грамм турата 10 литр шыва яраççĕ те вăйсăр çулăм çинче 30 минут вĕретеççĕ. Ӳсен-тăрана сирпĕтмешкĕн 2–3 литр вĕретнĕ шыва 10 литр тăрă шыв, 40 грамм супăнь хушаççĕ.

**Хутаçлă йӳçĕ пăрăç шывĕ.** 100 грамм вĕтетнĕ пăрăça 1 литр шыва яраççĕ те эмаль витнĕ хуралчаллă савăтра 1 сехет вĕретеççĕ, унтан 2 талăк лартаççĕ. Кайран пăрăç таткисене пĕтĕрсе шыва сăрăхтарса илеççĕ. Ку хăватлă шĕвеке кĕленчесене ярса упрама пулать. Ӳсен-тăрана сирпĕтме 10 литр шыва 100 грамм пăрăçлă шĕвек тата 40 грамм супăнь хушас пулать.

**Табак шывĕ.** Табак каяшĕн 400 грамне 10 литр шыва ярса пĕр талăк лартаççĕ, кайран 2 сехет вĕретеççĕ. Усă куриччен 2 хут шĕветеççĕ, 10 литр шĕвек пуçне 40 грамм супăнь хушаççĕ.

**Армути шывĕ.** Чечекре чухне пухаççĕ. Кăштах шаннă хыççăн 1 килограмм вĕтетнĕ курăка шыв ярса 10–15 минут вĕретеççĕ. Сăрăхтарса илсе 10 литр таран шыв хушаççĕ.

**Мулкач курăкĕн шывĕ.** Курăкăн çĕр çинчи пайĕпе пĕтĕмпех усă курмалла. Чечекре чухне пухмалла. Лайăх типĕтнĕ 800 грамм курăк çине 10 литр шыв яраççĕ те 30 минут вĕретеççĕ. Усă курас умĕн 20 грамм супăнь хушмалла.

**Табак тусанĕ.** Табак тусанĕпе сиенлекен хурт-кăпшанкă курăнма пуçласан ӳсен-тăрана тусанлама усă кураççĕ. Купăста, сухан шăнипе кĕрешме табак тусанне извеçпе хутăштараççĕ те ретсем тăрăх сапаççĕ. 1 тăваткал метра – 5–10 грамм.

***Тĕрлĕ курăкăн шывĕ хими имçамĕ пекех сиенлĕ мар пулин те вĕсемпе ĕçленĕ чухне асăрханулăх пирки те манма кирлĕ мар. Пухнă, туранă, тусанланă, сирпĕтнĕ чухне пит-куçа шĕвек, тусан лексерен сыхланмалла. Ĕçсене вĕçленĕ хыççăн аласене супăньпе лайăх çумалла. Пăрса илнĕ каяш юлашкисене çĕре чавса чикмелле.***

**В. АНДРЕЕВ,**
**пахчаçă.**

# Айтăр пирус туртма пăрахар!

Сывă пурнăç йĕркишĕн

**Майăн 31-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери пируссăр кун. Çакна халалласа Муркашри тĕп больницăра ытлари кун уçă алăксен кунĕ иртет. Пирус туртма пăрахас текенсене тата пирус туртнăран тĕрлĕ чир-чĕрпе аптăракансене пурне те чĕнетпĕр. Сире терапевтсем, кардиолог тата психиатр-нарколог хăвăрăн сывлăх мĕнле шайра пулнине тĕпчесе ăнлантарĕç, кирлĕ сĕнÿ-канаш парĕç.**

Туртма пăрахас текенсен вара çак канашсене шута илмелле: пируса пĕчĕк пачкăрине кăна туянăр тата яланах пĕршер пачка кăна; пачкăран пирус кăларса илнĕ хыççăн пачкине тÿрех пытарса чикĕр; фильтрлă пирус çеç туртăр, пируса нумай вăхăт туртса ан ларăр; пирусăн «сортне» пĕрмай улăштарса тăрăр; пируса куç тĕлне лекмелле вырăнта ан тытăр; пирус туртма сĕнессĕ пулсан та ан туртăр; хăвăрăн пирус пĕтсен никамран та ан ыйтăр; спичкăна е зажигалкăна вара яланах киле хăварăр, туртас килнĕ чухăна кашнинчех çынран ыйтмалла пултăр; кĕл савăтне пирус туртнă хыççăн тÿрех тасатса хурăр; пируса ĕмсе илнĕ хыççăн кашнинчех кĕл савăчĕн айккине хурăр; туртас умĕн виçĕ хутчен тарăннăн, лăпкăн сывлăш çавăрса илĕр; кашни пирусăн çуррине кăна туртăр; пируса пĕрре ĕмсе илнĕ хыççăнах сÿнтерĕр; апатланнă хыççăн туртма кирлех мар, утнă чухне те, тăнă чухне те, пирус туртнă вăхăтра та нимĕнле лайăх ĕç те ан тăвăр; çиес килнĕ чухне ан туртăр; кама та пулин кĕтнĕ чухне те пирус туртма ан тăрăшăр; туртас умĕн сехет çине пăхăр: туртиччен кĕçĕн 10 минут иртсе кайтăр, каярах вара 10 минут та; сехетре пĕр пирусран ытла туртмалла мар; сахалрах туртма пуçланăранпа миçе тенкĕ сыхласа хăварнине шута илсе пăхăр!

**Л. ИВАНОВА, психиатр-нарколог.**

Милици хроникинчен

# Çул çитменнисене те сăра сутаççĕ

Апрелĕн 25-мĕшĕнче пуçланнă «Алкоголь – табак» профилактика операцийĕ майăн 17-мĕшĕнче вĕсленчĕ. Çак тапхăрта алкоголь тата табак продукцине сутассин правилисене пăснă тĕслĕхсем тупса палăртса протоколсем çырма та тиврĕ. Акă çул çитмен икĕ çамрăка сăра сутнине тата 18 çул тултарман ачана пирус сутнине тупса палăртрăмăр.

Уйрăм çынсем спиртлă шĕвек е сăмакун сутнин 6 тĕслĕхĕпе «тĕл пултăмăр». Вĕсем çынсене сутнă шĕвексене экспертизăна ярса панă. Шĕвек ĕçме юрăхлă е юрăхсăр пулнине шăпах экспертиза татса парать. Унăн пĕтĕмлетĕвĕпе икĕ тĕслĕх тĕлĕшпе следстви пайне уголовлă ĕç пуçарма материалсем тăратрăмăр.

**И. ПЕТРОВ,**
**милицин участокри уполномоченнăйсен ертÿçи.**

Пĕлтерÿсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-5.

* * *

Отруби, комбикорма, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89603013479. 5-5.

* * *

Проекты зданий и инд. домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 5-5.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус, цемент, шифер, профнастил (крашеный, оцинкованный). Обращаться: «Рука мастера», с. Моргауши.
Тел.: 8-903-346-40-58. 3-5.

* * *

Продаю деревянный дом с земельным участком 40 сот. в д. Сятракасы Сятракасинского сельского поселения. Имеется газ, вода, канализация. Цена договорная. Тел.: 8-906-131-04-54.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 4-5.

* * *

Продаю гузовой автомобиль-самосвал ГАЗ-САЗ-3507 1993 года выпуска. Состояние хорошее. Цена договорная. Тел.: 8-919-653-40-62.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 4-8.

* * *

Куплю корову, бычка, телку.
Тел.: 8-905-342-39-43. 2-7.

* * *

Б-Сундырскому райпо требуются: для работы в Калайкасинской «Шашлычной» и Москакасинском «Ночном баре» повара, буфетчики; для работы в кафе «Шуçăм» в с. Б. Сундырь повара, кондитеры, буфетчики; продавцы для работы в Ахманеевском, дежурном магазине «Продукты», «Сельхозпродукты», Ильинском, Калайкасинском магазинах. Обращаться в отдел кадров райпо по тел.: 69-546.

* * *

Продаем: блоки керамзитобетонные, пенобетонные, тротуарную плитку, сетку-рабицу. Качественно, недорого. От производителя ООО «Промсварка».
Тел.: (8352)36-01-03, 36-01-06. 1-4.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 3-5.

* * *

ТЦ «Лотос» продает: профнастил, трубы для столбов, сетку-рабицу, профиль, банные печи, мотоблоки и прицепы. Доставка и сварочные работы (д. Рыкакасы). Тел.: 8-917-665-27-26. 3-5.

* * *

Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 3-5.

* * *

Продается речной песок, гравмасса. Доставка. Недорого. Тел.: 8-927-858-13-50. 2-5.

* * *

Продаю песок, гравмассу, щебень, торф. Доставка.
Тел.: 8-961-344-08-38. 2-5.

* * *

Реализуем песок речной, щебень разных фракций по низким ценам. Возможна доставка.
Тел.: 8-937-384-06-50. 2-12.

* * *

Срочно продаю двухкомнатную квартиру в д. Москакасы, 43 кв. м., в хорошем состоянии, имеется сарай и приусадебный участок. Цена договорная. Тел.: 8-927-841-11-30.

* * *

Продаю пятистенный деревянный дом в д. Сюмерткасы, в хорошем состоянии, самовывоз. Цена 75 тыс. руб. Торг. Тел.: 8-960-314-70-04.

* * *

Вăкăрсем, пăрусем, сурăхсем, такасем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.

* * *

Продается пресс-подборщик «Киргизстан», роторная косилка КРН-2,1, картофель мелочь по цене 1 кг – 5 руб. Тел.: 8-927-851-86-45, 8-927-857-55-69.

Спорт

# Муркаш каччи – иккĕмĕш



Совет Союзĕнче Серик Канакбаев казах боксерне нумайăшĕ пĕлнĕ. Вăл Мускаври Олимпиадăра кĕмĕл медаль çĕнсе илме пултарчĕ.

Нумаях пулмасть Казахстан Республикинчи Павлодар хулинче Серик Канакбаев парнисене çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм тĕнчери турнир иртнĕ. Унта США, Куба, Сири, Греци, Венгри, Монголи, Киргизстан, Таджикистан, Узбекистан, Раççей спортсменĕсем хутшăннă. Пĕтĕмпе 170 боксер ринг çине тухнă.

Муркаш каччи Александр Никитин (52 кг виçере) çак турнирта ăнăçлă ăмăртса иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Вăл Монголипе Казахстанăн икĕ боксерне парăнтарнă.

Сăн ÿкерчĕкре: судья пирĕн ентеш А. Никитин (сулахайри) çĕнтернине пĕлтерет.

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-5.

3 июня с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других Российских производителей. 5-5.

Продаем доски: обрезные, необрезные, брус любого сечения, срубы из оцилиндрованного бревна. Доставка бесплатно. Тел.: 8-919-679-18-11, 8-927-859-91-55. 2-5.

Продаю: металлочерепицу импортную, отечественную гибкую черепицу, профнастил кровельный, стеновой, сайдинг импортный, отечественный, гидро-, пароизоляцию. Консультация, замер, расчет, доставка, монтаж, скидки. Без выходных. Тел.: 8-917-658-84-56, 8-927-665-37-68. 5-5.

ЗАО «МСО «Моргаушская» требуются: рамщик, заведующая магазином, продавец (хозтовары, автозапчасти, строительные материалы), водитель КамАЗа. Реализует блоки керамзитобетонные пропаренные. Обращаться по тел.: 69-7-23, 69-8-59. 1-2.

Объявления

## ООО «ВИВАТ»

**Изготовление высококачественных деревянных окон типа «Евро» и ОСП на заказ по самым низким ценам в Чувашии. Сертифицировано. Гарантия до пяти лет на лакокрасочные материалы.**
*Замер, установка, монтаж откосов.*
*Магазин «Окна и двери» на ул. Чапаева, д. 37/1.*
**Тел.: 8(83541)62-5-86, 8-917-67-94-733.**
**Деревянные окна – символ достатка, престижа и хорошего вкуса!** 5-5.

ПРОГРАММА КРЕДИТОВАНИЯ РАБОТНИКОВ БЮДЖЕТНОЙ СФЕРЫ

РЕШИ САМ, СКОЛЬКО ПЛАТИТЬ ЗА КРЕДИТ!

- БЕЗ ЗАЛОГА И ПОРУЧИТЕЛЕЙ
- ПОГАШЕНИЕ НАПРЯМУЮ ИЗ З/П
- ОФОРМЛЕНИЕ НА РАБОЧЕМ МЕСТЕ

8-800-100-50-50 (ЗВОНОК БЕСПЛАТНЫЙ)
8-908-842-30-36 телефон с. Мограуши
www.bydgetniki.ru

Изготавливаем и устанавливаем деревенские ворота, калитки, заборы, палисадники. Дешево. Пенсионерам – скидки. Тел.: 8-905-340-20-30, 38-75-74. 2-6.

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, торф с доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 12-12.

**МОТОБЛОКИ**
Навесное оборудование, прицепы к мотоблокам




ШИРОКИЙ ВЫБОР, ВЫГОДНЫЙ КРЕДИТ, ДОСТАВКА!
с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. 3-10.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 17-50.

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. 3-5.

Продаем: асфальт, торф, песок (речной, карьерный), ОПГС (гравмасса), щебень (гранитный, известковый), керамзит, сосновые жерди. Тел.: 44-22-24, 8-903-358-22-24, 8-905-343-91-07. 2-6.

**пластиковые ОКНА**
*Немецкое качество*
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам:
*скидки до 35%* 8927667664
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
*Окна стали дешевле...*

## ИП Иванов В.И.

**Изготовление высококачественных пластиковых окон на заказ по самым низким ценам в Чувашии. А также межкомнатные и металлические двери. Продукция сертифицирована. Гарантия.**
*Замер, установка, монтаж откосов.*
*Магазин «Окна и двери» по ул. Чапаева, д. 37/1.*
**Тел.: 8(83541)62-5-86, 8-917-67-94-733.** 5-5.

ООО «Металл-строй» изготавливает и продает теплицы разных размеров, банные печи, профнастил, сетки-рабицы, кованые заборы, ворота, трубы разных диаметров и т. д. Тел.: 8-937-390-73-51. Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 14 (бывший плодоовощной комбинат). 5-5.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете pană 27.05.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4337.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.